26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ФЕВРАЛЬ 5 ШАМАТКУН 25(6520) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА
Арми генералне ВАТУТИНА

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, **Кировоград** хулинчен çурçĕртерехри районран хĕвеланăç еннелле тата **Украинăри** 1-мĕш фронт çарĕсем **Белая Церковь** хулинчен кăнтăр хĕвелтухăçнерехри районран хĕвелтухăç еннелле наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, 5 кун хушши малалла тапăнса пырса, пĕр-пĕрне хирĕç кашни енчен 50 километртан пуçласа 75 километр таран кайнă, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ вырăна наступлени пыракан кашни участокрах фронт тăршшĕпе 160—170 километр таран аслăлатнă.

Çак операцисене туса, **Украинăри** 1-мĕшпе 2-мĕш фронт çарĕсем пĕр-пĕринпе **Звенигородка, Шпола** районĕнче пĕрлешнĕ, çапла вара вĕсем тăшманăн çав йĕртен çурçĕртерехре çапăçакан тăхăр пехотнăй дивизирен тата пĕр танковăй дивизирен тăракан группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

Çак наступленире пирĕн çарсем халăх пурăнакан 300 пункта ытла ирĕке кăларнă, вăл шутра **Звенигородка, Шпола, Смела, Богуслав, Канев** хулисене тата **Бобринская, Цветково, Мироновка** ятлă пысăк чугун çул узелĕсене.

Çапăçусенче **Галанин** генерал-лейтенантăн, **Рыжов** генерал-майорăн, **Жмаченко** генерал-лейтенантăн, **Трофименко** генерал-лейтенантăн, **Коротеев** генерал-лейтенантăн, **Бирюков** генерал-майорăн, **Акименко** генерал-майорăн, **Фоменко** генерал-майорăн, **Шмыго** генерал-майорăн тата **Пузиков** генерал-майорăн çарĕсем, **Селиванов** генерал-майорăн кавалерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-полковникĕн **Ротмистровăн**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **Кравченкăн**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **Кириченкăн**, танковăй çарсен генерал-майорĕн **Полозковăн**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **Алексеевăн** тата танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **Волковăн** танкисчĕсем, артиллери генерал-полковникĕн **Варенцовăн**, артиллери генерал-лейтенанчĕн **Фоминăн**, артиллери генерал-майорĕн **Гусаровăн**, артиллери генерал-майорĕн **Фаустовăн**, артиллери генерал-майорĕн **Глебовăн**, артиллери генерал-майорĕн **Лебедевăн** тата **Зыков** полковникăн артиллерисчĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн **Красовскин** тата авиаци генерал-лейтенанчĕн **Горюновăн** летчикĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсене яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă икĕ фронтри соединенисемпе частьсене те „**Звенигородски**" тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 3-мĕшĕнче, 20 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици **Мускав**, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, нимĕçсен оборонине татса тăшманăн пысăк группировкине çавăрса илнĕ Украинăри 2-мĕшпе 1-мĕш фронтсен паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, нимĕçсен оборонине татса **Звенигородка, Шпола, Смела, Богуслав** тата **Канев** хулисемшĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, **тав тăватăп**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 3-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 2-мĕшĕнче НАРВА хули енче пирĕн çарсем наступление ăнăçлăн вăйлатса пынă, 40 ял ытла тытса илнĕ, вăл шутра: УСТЬ-ЛУГА, МЕЖНИКИ, КРАКОЛЬЕ, НОВАЯ ДЕРЕВНЯ, ВОЛКОВО, ВАНАКЮЛА, ФЕДОРОВКА, ДУБРОВКА, МОНАСТЫРЕК, ВОРОНОВО, ЧЕРНО, КРИВАЯ ЛУКА, ВОРОВНЯ, МАЛАЯ ПОЛЯ, НИКОЛЬЩИНА.

СИВЕРСКИЙ станцинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, чылай ялсем тытса илнĕ.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, ТИГОДА, НОВАЯ ДЕРЕВНЯ, НАНЕЖНО, ОЛЬХОВКА ятлă ялсене тытса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, МЕТАЛЬНИКОВО, ВАШКОВО, ГОРЫ, ТУМАШИ, БОРЩОВО, ТЕРЕШКОВО, БУЛАВИНА ятлă ялсене тытса илнĕ.

Февралĕн 1-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 85 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 64 самолетне персе ӳкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем НАРВА хули енче çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра: КАЛЛИВАРЕ, ВЕНЕКЮЛА, ТЫРВАЛА, УСТЬ-ЧЕРНОВА, СУ..., ЖЕРДЯНКА, БОЛЬШАЯ ПОЛЯ, СЛАНЦЫ, ЗАМОЖЬЕ, ЗАЛЕСЬЕ, МАЛАЯ, ВЫСКАТКА, БОЛЬШАЯ ВЫСКАТКА, РУДНО, ГУСЕВА ГОРА, ПЕРНИЦЫ, ВЕЛИКОЕ СЕЛО ятлă ялсене тата ПРЕОБРАЖЕНКА, СЛАНЦЫ, ИЩЕВО ятлă чугун çул станцийĕсене.

СИВЕРСКИЙ станцийĕнчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, БЕКОВО, КРАСНЫЙ ХОЛМ, ПОКРОВКА, КЕМСК, ЯЩЕРА, НИЗОВКА, ЛУГИ ятлă ялсене тытса илнĕ.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманăн вăрман çулĕ сем çинчи инженерла чăрмавĕсене çĕнтере-çĕнтере, çапăçса малалла куçса пынă, ПОГОРЕЛИ, ВДИЦКО, НИВКИ, ФИНЕВ ЛУГ, ТЕСОВСТРОЙ, ВОСХОД, СЛЕПЦЫ, ПЯТИЛИПЫ, ГУЗИ ятлă ялсене тата РОГАТКА, КЕРЕСТЬ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ

СССР Верховный Совечĕ йышăннă законсем

Союзлă республикăсен çар формированийĕсене тăвасси çинчен тата çавна май Оборона Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ туса хурасси çинчен калакан

ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн оборона хăватне ӳстерес тесе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ çапла **йышăнать:**

1. Союзлă республикăсем хăйсен çар формированийĕсене тăвaççĕ.

2. Совет Союзĕн Конституцийĕ çумне çапла хушса çырас:

А) СССР Конституцийĕн 14-мĕш статьинчи «Ж» пункт çумне, «ССР Союзĕн оборонине организацилесси тата ССР Союзĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырасси» сăмахсем хыççăн— «союзлă республикăсен çар формированийĕсене организацилемелли тĕп йĕркесене туса хурасси» сăмахсем çырса хурас. Çав пункта вара çапла çырас:

«Ж) ССР Союзĕн оборонине организацилесси, ССР Союзĕн мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене ертсе пырасси, союзлă республикăсен çар формированийĕсене организацилемелли тĕп йĕркесене туса хурасси;»

Б) СССР Конституцийĕ çумне 18—Б статья çырса хурас, ăна çапла çырас:

«18—Б статья. Кашни союзлă республикăн хăйĕн çар формированийĕсем пур;»

В) СССР Конституцийĕн 60-мĕш статьи çумне «Е» пункт çырса хурас, ăна çапла çырас:

«Е) Республикăри çар формированийĕсене тумалли йĕркене туса хурать;»

3. Оборона Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ туса хурас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

Союзлă республикăсене тулашри çыхăнусем тĕлĕшпе полномочисем парасси çинчен тата çавна май Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ туса хурасси çинчен калакан

ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн ытти государствăсемпе тытакан çыхăнăвĕсене аслăлатас тата вĕсемпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетес тесе тата союзлă республикăсен ют çĕршыв государствисемпе тӳррĕмĕнех çыхăнма кирли ӳснине шута илсе, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ **çапла йышăнать:**

1. Союзлă республикăсем ют çĕршыв государствисемпе тӳррĕмĕнех çыхăнма тата вĕсемпе килĕшӳсем тума пултараççĕ.

2. СССР Конституцийĕ çумне çапла хушса çырас:

А) СССР Конституцийĕн 14-мĕш статьинчи «А» пункт çумне, «тĕнчери государствăсем хушшинчи çыхăнусенче Союз ĕçне туса тăрасси, ытти государствăсемпе договорсем туса вĕсене ратификацилесси» сăмахсем хыççăн—«союзлă республикăсен ют çĕршыв государствисемпе тытакан çыхăнăвĕсенче пĕтĕмĕшле йĕрке туса хурасси» ятлă сăмахсем çырса хурас. Çав пункта вара çапла çырас:

«А) Тĕнчери государствăсем хушшинчи çыхăнусенче Союз ĕçне туса тăрасси, ытти государствăсемпе договорсем туса вĕсене ратификацилесси, союзлă республикăсен ют çĕршыв государствисемпе тытакан çыхăнăвĕсенче пĕтĕмĕшле йĕрке туса хурасси»;

Б) СССР Конституцийĕ çумне 18—А статья çырса хурас, ăна çапла çырас:

«**18—А статья.** Кашни союзлă республика ют çĕршыв государствисемпе тӳррĕмĕнех çыхăнма, вĕсемпе килĕшӳсем тума тата пĕр-пĕрин патне дипломатипе консул представителĕсем яма пултарать;»

В) СССР Конституцийĕн 60-мĕш статьи çумне «Д» пункт çырса хурас, ăна çапла çырас:

«Д) тĕнчери государствăсем хушшинчи çыхăнусенче союзлă республикăн ĕçĕсене туса тăрассине йĕркелесе хурать».

3. Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатран союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ туса хурас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕ çапла **йышăнать:**

Николай Михайлович **Шверник** юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма суйлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

Йĕпреç МТС-не ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пани

Январĕн 31-мĕшĕ Йĕпреç районĕшĕн чаплă та савăнмалла кун пулчĕ. Йĕпреç МТС-ĕн коллективĕ, районри колхоз председателĕсем, ял хуçалăхĕнчи тата промышленноçри стахановецсем тата тĕрлĕ учрежденисен представителĕсем районри клуба пухăннă.

Паян кунта—МТС коллективне 1943 çулхи IV кварталти тата декабрь уйăхĕнче тракторсене юсамалли плана ăнăçлăн пурнăçланăшăн ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне парас ятпа чаплă пуху.

Пуху президиумĕнче — районри партипе совет органĕсен руководителĕсем, ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Совнаркомĕн, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн представителĕсем тата МТС-ри паллă стахановецсем.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă май, МТС коллективне саламласа сывлăх сунма Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместительне А. И. Киреев юлташа сăмах параççĕ.

— Сирĕн МТС 1943 çулхи IV кварталта тата 1943 çулхи декабрь уйăхĕнче тракторсене юсамалли плана ăнăçлăн пурнăçланăшăн тата Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн ВЦСПС-па Наркомземăн Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. МТС-ри трактористсен тата тракторсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксен ĕçне партипе правительство пысăка хурса хисеплерĕç. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илни сирĕн коллектив умне малашне татах та ответлăрах задачăсем кăларса тăратать, эсир çак чаплă ялава хăвăрăн МТС-ра хăварассишĕн ырми канми ĕçлемелле, малалла та социа-

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Ӳкерчĕк çинче: Арми генералĕ Н. Ф. ВАТУТИН.
(ТАСС фотохроники)

Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный Сталинград çыннисен делегацине хисеплĕ хĕç пани

Февралĕн 2-мĕшĕнче Кремльте Сталинград çыннисен делегацине хисеплĕ хĕç панă, çав парнене ăна, Сталинград хулине паттăррăн хӳтĕленине хисеплесе памашкăн, Великобритани королĕ VI Георг парса янă.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ ячĕпе çав хĕçе Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный юлташ панă, ăна Сталинград çыннисен делегацин пуçлăхне—Сталинград хула совечĕн исполкомĕн председательне Д. М. Пигалев юлташа панă.

С. М. Буденный юлташ тата Д. М. Пигалев юлташ пĕр-пĕрне сăмахсем каланă.

Хисеплĕ хĕçе панă çĕрте çаксем пулнă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов, Авиаци Маршалĕ Новиков, Главнăй артиллери управленийĕн начальникĕ Яковлев генерал-полковник, Бронетанковăй управлени начальникĕ Федоренко генерал-полковник, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, Великобританин Совет Союзĕнчи послĕ А. К. Керр господин тата Британи посольствипе çар миссийĕн ответлă сотрудникĕсем.

Совет Союзĕн Маршалĕ С. М. Буденный юлташ каланă сăмах

Юлташсем! Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ мана сире хисеплĕ хĕç пама хушрĕ, çак хĕçе ăна Сталинград хулине паттăррăн хӳтĕленине палăртса хăварас шутпа Сталинград гражданĕсене памашкăн Великобритани королĕ VI Георг панă.

Çак парне вăл пĕрлехи тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Великобританипе Совет Союзĕн халăхĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени çирĕпленсе пынине пĕлтерет. Эпир пĕлетпĕр: союзлă государствăсен çарĕсем фашистла тискер кайăка вĕлермеллĕх пырса çапас сехет, юнлă гитлерла режима ĕмĕрлĕхех пĕтерсе лартас сехет инçе мар ĕнтĕ.

Паян, 1944 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче нимĕç çарĕсен Сталинградри группировкине аркатса тăкнăранпа çулталăк çитрĕ. Хĕрлĕ Çар тата Сталинград çыннисем тăшман çав тери хаяррăн хĕссе пынине пĕлĕк уйăх ытла тӳссе тăчĕç. Германи командованийĕн стратегиллĕ планĕсенче Сталинград хули уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Сталинграда тытса илни нимĕç командованине пирĕн Кăнтăрпа çыхăнмалли çулсене татма тата Мускав хулине тылран пырса çапма май панă пулĕччĕ. Анчах нимĕçсен çак авантюристла планĕсем намăссăн путланса ларчĕç, нимĕçсен чи лайăх дивизийĕсем Сталинград патĕнче вилсе выртрĕç.

Сталинграда хӳтĕлени 1918 çулта та, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче те Сталин юлташăн ячĕпе сыхăнса тăрать. Вăл пирĕн государствăн историне, вăрçăсен историне Сталин юлташăн ячĕпе кĕрсе юлĕ, вăл вырăс халăхĕн никам çапса çĕмĕрейми хăватне тата чапне кăтартса тăракан паллă пулса тăрĕ.

Сталинградăн паттăр воинĕсен — Хĕрлĕ Çарăн салтакĕсен, офицерĕсен тата генералĕсен, Сталинград хулипе облаçĕнчи рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин чапĕ ĕмĕрне те тĕксĕмленмĕ.

Пирĕн Тăван çĕршыв тата Хĕрлĕ Çар çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: Сталинград çыннисем совет халăхĕн аслă çулпуçĕн ячĕпе тăракан çав хулан чыслăхĕпе чапне малашне те лайăх сыхласа усрĕç.

Ĕççынни депутачĕсен Сталинград хула совечĕн исполкомĕн председателĕ Д. М. Пигалев юлташ каланă сăмах

Великобритани королĕ панă çак парнене эпир нимĕçсен фашистла çарĕсене Сталинград патĕнче аркатса тăкни çулталăк çитнĕ историллĕ чаплă кун илетпĕр.

Сталинграда паттăррăн хӳтĕленĕ кунсенче пĕтĕм прогресивнăй этемлĕх Сталинград патĕнчи калама çук вăйлă çапăçу ăнăçлăн вĕçленессине шанса кĕтсе тăчĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăн Атăл çинчи крепоçне Хĕрлĕ Çарăн кашни салтакĕпе офицерĕ тата генералĕ, Сталинград хулипе облаçĕнчи кашни рабочипе колхозник тата интеллигентла ĕç работникĕ хăйсен вăйĕпе пурнăçне шеллемесĕр хӳтĕлесе тăчĕç. Пирĕн Тăван çĕршыв тата Сталин юлташ пире Сталинград хулине сыхласа хăварма хушрĕç, çакă вара пирĕншĕн закон пулса тăчĕ. Сталинград хулине пирĕн пĕтĕм аслă совет çĕршывĕ хӳтĕлерĕ. Сталинград патĕнче нимĕçсен фашистла захватчикĕсен темиçе çĕр пин çынни вилсе выртрĕ. Гитлеровецсен Европăри халăхсене чуралантарма шутласа хунă планĕсем пĕтсе ларчĕç. Сталинград патĕнче гитлеровецсен чи лайăх çарĕсене аркатса тăкни нимĕçсен пĕтĕм фашистла çарĕ пĕтсе ларассин пуçламăшĕ пулса тăчĕ.

Çак хĕçе илсе, эпир çапла калатпăр: эпир ăна Совет Союзĕпе Великобритани халăхĕсем кĕрешӳре пĕр-пĕринпе ытларах та ытларах килĕштерсе ĕçленине кăтартса тăракан паллă вырăнне хурса хисеплесе усрăпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Великобританипе Совет Союзĕн халăхĕсем кĕрешӳре пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерӳвĕсене тăвакан, нимĕçсен фашистла çарĕсене Сталинград патĕнче аркатассине организацилекен — пирĕн юратнă сулпуç Сталин юлташ!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çапла малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, МАЛЫЕ СОКОЛЬНИКИ, САНЬКИ, СПИЧИНО, КРАСНОГОРЬЕ, КОРНИЛОВО, АНАНКИНО ятлă ялсене тата АБОВО ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ.

Темиçе кун каярах УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, КИРОВОГРАД хулинчен çурçĕртерехри районран хĕвеланăç еннелле тата УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районран хĕвелтухăç еннелле наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, 5 кун хушши малалла тапăнса пырса, пĕр-пĕрне хирĕç кашни енчен 50 километртан пуçласа 75 километр таран кайнă, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ вырăнра наступлени пыракан кашни участокра фронт тăршшĕпе 160—175 километр таран аслăлатнă.

Çак операцисене туса, УКРАИНĂРИ 2-мĕшпе 1-мĕш фронт çарĕсем пĕр-пĕринпе ЗВЕНИГОРОДКА, ШПОЛА хулисен районĕнче пĕрлешнĕ, çапла вара вĕсем тăшманăн çав йĕртен çурçĕртерехре çапăçакан тăхăр пехотнăй дивизирен тата пĕр танковăй дивизирен тăракан группировкине пĕтĕмпех çавăрса илнĕ.

Пирĕн çарсем халăх пурăнакан 300 пункта ытла ирĕке кăларнă, вăл шутра СМЕЛА хулине, ШПОЛА хулине, ЗВЕНИГОРОДКА хулине, КАНЕВ хулине, БОГУСЛАВ хулине, Киев облаçĕнчи РОТМИСТРОВКА, ЛИСЯНКА, МИРОНОВКА ятлă район центрĕсене, БОБРИНСКАЯ, ЦВЕТКОВО, МИРОНОВКА ятлă пысăк чугун çул узелĕсене, КОНСТАНТИНОВКА, БАЛАКЛЕЯ, КОВАЛИХА, ПОПОВКА, ЛОЗАНОВКА, ТЕЛЕПИНО, ПАСТОРСКОЕ, ОСИТНЯЖКА, РЕЙМЕНТАРОВКА, КАНИЖ, КАЛИНОВКА, МЕЛЬНИКОВКА, НОСАЧЕВ, ТАШЛЫК, КУЦОВКА, САМ-ГОРОДОК, МАКЕЕВКА, КАПИТАНОВКА, ЖУРОВКА, ТУРИЯ, МАТУСОВ, СИГНАЕВКА, ЛЕБЕДИН, ЛИПЯНКА, НАДТОЧАЕВКА, ВОДЯНОК, ТОЛМАЧ, ТОЛСТАЯ, ТОПИЛЬНО, КАЗАЦКОЕ, БОГАЧЕВКА, СТЕЦОВКА, ЮРКОВКА, ВИНОГРАД, КАМЕННЫЙ БРОД, МЕДВИН, ИСАЙКИ, ДЫБНИЦЫ, ЯБЛОНОВКА, БУЖАНКА, ЩЕРБАШЕНЦЫ, СИДОРОВКА, МИСАЙЛОВКА, ЧИЖОВКА, РЫЖАНОВКА, МУРЗИНЦЫ, ПОПОВКА, ТАРАСОВКА, ШЕВЧЕНКОВО, МОРЕНЦЫ, КВИТКИ, СЕЛИЩЕ, НИКОЛАЕВКА, КАРАПЫШИ, ЗЕЛЕНКИ, РОССОВА, ПОТОК, МАКЕДОНЫ, КОЗИН, МАСЛОВКА, СТЕПАНЦЫ, ЯПЛОНОВ ятлă пысăк ялсене тата ПЕРЕГОНОВКА, ВЛАДИМИРОВКА, НОСАЧЕВ, СИГНАЕВКА, ШПОЛА, ИСКРЕННОЕ, КАРАПЫШИ, ТЕМПЫ, ЛАЗУРЦЫ, ТРОШИН ятлă чугун çул станцийĕсене.

Февралĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 77 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 40 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем, кирлĕ çулсен узелне хăйсен аллинчех тытса хăварма хăтланса, пысăк вăйсем пухса тăратнă. Пирĕн боецсем çав вăйсене пĕр вăхăтрах виçĕ енчен пырса çапнă. Тăшман, хăйне пĕтĕмпех çавăрса илессинчен хăраса, васкасах каялла чакнă. Çав çапăçура нимĕçсен 8 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çĕмĕрнĕ тата гитлеровецсене икĕ батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени чăçĕсем, çав тери хăвăртăн малалла куçса пырса, Плюсса шывĕ урлă каçнă та, партизансемпе пĕрле кĕрешсе, Сланцы ятлă чугун çул станцийĕпе яла тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Любань хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени боецĕсем, тăшманăн аркатса тăкнă частĕсене хăваласа пырса, çав частĕсен обозĕсене тытса илнĕ. [illegible] Новая Деревня [illegible] 200 [illegible] тытса илнĕ. [illegible]

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Тăшман хирĕç тăрать, резервсем илсе-илсе пырать, пехотăпа танксем [illegible] контратакăсем тăвать. Кун каçа пĕр соединени чăçĕсем тăшманăн [illegible] атакине сирсе янă, 800 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, çавăн пекех тата 13 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупа пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем нимĕç çарĕсене тата транспорт колоннисене [illegible] çапнă, пехотăпа çар хатĕрĕсем тиесе пыракан 100 автомашинăна çитиперсе тăкнă.

* * *

Новосокольники хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман çĕнĕ вăйсем куçарса пынă та ирхине темиçе хут контратака тунă. Совет чăçĕсем гитлеровецсен атакисене хирĕç [illegible] темиçе ял тытса илнĕ. Çав районра [illegible] кун хушшинчи çапăçусенче 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсенĕн 136 тупă, 50 миномет, 2.000 автоматпа винтовка, 6 боеприпас склачĕ, [illegible] 5 складне тата 7 складне [illegible] тытса илнĕ. [illegible]

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, Кировоград хулинчен çурçĕртерехри районра тата Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем Белая Церковь хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра наступлени пуçласа ярса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та, пĕр-пĕрне хирĕç ăнăçлăн куçса пырса, Звенигородкăпа Шпола хулисен районĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. Пилĕк кун хушшинчи наступленире пирĕн çарсем халăх пурăнакан 300 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра Смела хулине, Звенигородка хулине Шпола хулине, Богуслав хулине, Канев хулине, Киев облаçĕнчи Ротмистровка, Лисянка, Мироновка ятлă район центрĕсене, Бобринская, Цветково, Миронoвка ятлă чугун çул узелĕсене. Çав операцие туса пирĕн çарсем тăшманăн 9 пехотнăй дивизирен тата пĕр танковăй дивизирен тăракан пысăк группировкине çавăрса илнĕ. Тăшман тĕрлĕ участоксенче ункăран [illegible]

[illegible] гитлеровецсем [illegible] 42 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 6 тупă [illegible] 11 бронетранспортер пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем [illegible]

* * *

Украинăри партизансен отрячĕсем Волынь облаçĕнчи [illegible] çапăçса илнĕ. Ултă сехет пынă çапăçура партизансем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та 200 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Винтовкăсем, автоматсем тата боеприпассем нумай тытса илнĕ [illegible]

Ленинградпа Колпино хушшинче поездсем çÿреме пуçланă

Октябрьски чугун çул çинче Ленинградпа Колпино хушшинче пассажирски поездсем йĕркеллĕ çÿреме пуçланă. Икĕ çул хушшинче нимĕçсем артиллерипе Колпино станцине [illegible] персе тăнă. Поездсем станци патне темиçе километр çитичен чарăннă. [illegible] (ТАСС).

ВКП(б) Обкомĕнче

Çĕмĕрле тата Ишлей МТС-ĕсенче тракторсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Çĕмĕрле тата Ишлей МТС-сенче тракторсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-явнă. Обком бюровĕ Çĕмĕрле МТС-ĕнче тракторсене юсасси пачах та çителĕксĕр пынине палăртнă. Январь уйăхĕнче МТС тракторсене юсамалли уйăхри плана тултарман, газогенераторлă тракторсене юсас ĕçе тĕрĕссипе тытăнман та. Тракторсене юсас ĕç çавăн пек юлса пыни МТС директорĕ Чумейкин юлташ тракторсене юсас ĕçе япăх ертсе пынинчен килет. МТС-ри мастерскойсенче ĕçе кирлĕ пек тĕрĕс организацилемен, тракторсене юсас ĕçре пахa результатсем панă узловой методпа усă курмаççĕ, ответлă узелсене юсас тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа бригадăсем уйăрман, вăл ĕçе тума опыт сахал трактористсене хушнă. Кулленхи заданисене кашни бригадăпа юсав ĕçĕнчи рабочи патне çитермеççĕ. Тракторсене мĕнле юсанине тĕрĕслесе пымаççĕ, çавна пула ĕнтĕ юсанă 11 трактортан 6-шĕн пысăк çитменлĕхсем пур.

МТС директорĕ Чумейкин юлташ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ тракторсемпе ял хуçалăх машинисене хĕллехи вăхăтра пăхса усрасси çинчен йышăннă постановление пăсса пырать. Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ тракторсене МТС килкартине çийĕнчех илсе пыма кăтартса панă пулин те, январĕн 15-мĕшĕ тĕлне 3 трактор колхозсенче пулнă.

Ишлей МТС-а тракторсене юсамалли IV-мĕш кварталти плана иртерсе тултарнă хыççăн январь уйăхĕнче ĕç хăвăртлăхĕсене питĕ чакарса пăрахнă, çапла вара вăл тракторсене юсамалли уйăхри плана тултармасăр хăварнă. МТС директорĕн ĕçĕсене тăваканĕ Рязанов юлташ, тракторсене юсаса пĕтернĕ хыççăн, çав ĕçри бригадăсене тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре юсас ĕçе куçарас вырăнне салатса ярса, пысăк йăнăш тунă.

ВКП(б) Çĕмĕрле тата Ишлей райкомĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ремонтран тухнă тракторсене йышăнасси çинчен 1943 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă постановление пурнăçа кĕртмеççĕ. Вăл районсенче ку тарана çитсе те тракторсене йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен государство комиссийĕсене туман, ремонтран тухнă тракторсене йышăнман.

Райкомсем тракторсене юсас ĕçе начар ертсе пыраççĕ. Ремонт ĕçĕнчи рабочисем хушшинче массăллă политикăллă ĕçе пачах та çителĕксĕр йĕркеленĕ. Трактористсем хушшинче дисциплина сÿрĕк, прогулсем, ĕçе кая юлса тухнисем, ĕçрен хăй тĕллĕн тухса кайнисем нумай пулнă. Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕнчи рабочисемпе служащисем чĕнсе каланине сÿтсе-явнă чухне ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисем ремонт бригадисем татăклă обязательствăсем илессине организацилемен, çавна пула вара тракторсене юсанă çĕрте социализмлă ăмăртăва ячĕшĕн кăна организациленĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Çĕмĕрле МТС директорне Чумейкин юлташа тракторсене юсас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынăшăн тата Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ тракторсене колхозсенчен МТС килкартисене çийĕнчех илсе пыма хушнине пурнăçа кĕртменшĕн ятласа хăварнă.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Чумейкин юлташа тата ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарьне Григорьев юлташа çак ĕçсене тума хушса хăварнă:

а) тракторсене юсас ĕçе хăвăртлатма халех татăклă мерăсем йышăнмалла тата çав ĕçе правительство кăтартса панă срокенче туса ĕлкĕртмелле. Уйрăмăнах газогенераторлă тракторсене юсас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, вăл тракторсене юсанă çĕрте ĕçлеме опытлă бригадирсемпе трактористсенчен уйрăм бригадăсем тумалла;

б) тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе халиччен çав ĕçе хутшăнман мĕнпур трактористсемпе комбайнерсене явăçтармалла;

в) тракторсене юсанă çĕрте ĕçлекен рабочисен ĕçне организацилес тĕлĕшпе тивĕçлĕ йĕркелĕх тумалла, тракторсене уйрăм бригадăсем тăрăх узловой методпа юсамалла, кашни бригада патне кулленхи производство заданийĕсене çитерсе тăрса, вĕсене мĕнле пурнăçланине çирĕппĕн контроллесе тăмалла;

г) пилĕк кунлăх срокра пĕтĕм тракторсене МТС килкартисене илсе пымалла, трактор бригадисенчен мĕнпур кăкарса çÿремелли машинăсене йышăнса, вĕсене юсама тытăнмалла.

Парти Обкомĕ ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарьне Григорьев юлташа тата «Большевик» завод директорне Шустин юлташа Çĕмĕрле МТС-не тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре халех пулăшма хушнă, çавăнпа та заводра кивелнĕ гусеницăсене юсас ĕçе организацилемелле, çавăн пекех тата МТС-а шăратса сыпăçтармалли ĕçсене туса памалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, Çĕмĕрле МТС-ĕ ку таранччен те газогенераторлă тракторсем валли топливо хатĕрлеме тытăнманнине тата çавăн пекех Звенигово затонĕнчен панă краççына турттарма пуçăнманнине палăртса, МТС директорне Чумейкин юлташа тата Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн председательне Подклетнов юлташа газогенераторлă тракторсем валли халех топливо хатĕрлеме тытăнма, çапла вара топливо хатĕрлемелли плана 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултарма хушнă. МТС ĕçлесе паракан мĕнпур колхозсем патне краççын турттарас енĕпе пилĕккунлăх заданисем çитерсе, çунтармалли япаласене февралĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр турттарса пĕтермелле.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Ишлей МТС директорĕн ĕçĕсене тăвакан Рязанов юлташа тата ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарьне Сидоров юлташа, тракторсене юсас ĕçри çак решенире палăртнă çитменлĕхсене халех пĕтерсе, тракторсене юсас ĕçе правительство кăтартса панă срокенче туса ĕлкĕртме хушнă. Ремонт ĕçĕнчен янă трактористсене халех МТС-а тавăрса, вĕсен вăйĕпе ялхуçалăх машинисене юсассине организацилемелле.

ВКП(б) Çĕмĕрле тата Ишлей райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене государство комиссийĕсен составне халех пăхса тухса çирĕплетме тата ремонтран кăларнă пĕтĕм тракторсене тĕрĕслесе йышăнма хушнă. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи тракторсене йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен государство комиссийĕн председателĕ пулма ВКП(б) Обкомĕн решенийĕ тăрăх ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн пĕрремĕш секретарьне Григорьев юлташа çирĕплетнĕ.

ВКП(б) Обкомĕ, Çĕмĕрле тата Ишлей райкомĕсене тракторсене вăхăтра тата лайăх юсани 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттермелли кирлĕ услови пулса тăни çинчен асра тытма хушса, ВКП(б) райком секретарĕсене тракторсене юсас ĕçе куллен ертсе пыма, мастерскойсенче большевикла йĕркелĕх тума, ĕçе тĕрĕс организацилеме, ремонт графикне пурнăçа кĕртессишĕн МТС-сен пĕтĕм коллективĕсене ĕçе мобилизацилеме хушнă.

Социализмлă ăмăртăва ячĕшĕн кăна организацилессине пĕтерсе, ремонт ĕçĕнчи мĕнпур работниксене ремонт ĕçне хăвăрт та лайăх пурнăçа кĕртессишĕн ăмăртса ĕçлеме йĕркелемелле. ВКП(б) райкомĕсен тракторсене юсанă çĕрте социализмлă ăмăртăва куллен ертсе пымалла, ĕçри пĕтĕм чăрмавсене вăхăтра пĕтермелле, кая юлса пыракан бригадăсемпе рабочисене çийĕнчех пулăшмалла, социализмлă ăмăртăвăн результачĕсене куллен кăтартса пымалла тата малта пыракан бригадăсемпе рабочисен опытне анлăн сарса пымалла.

ВКП(б) Çĕмĕрле тата Ишлей райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, трактористсем темиçе хут пĕлтернĕ тата ыйтнă пулин те, вĕсене колхозсенчен ĕçкунĕсем тăрăх илмелли тырра парас тĕлĕшпе халĕ те мерăсем йышăнманнине ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пачах та тĕрĕс мар тесе шутлать тата ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене çав ĕçе халех тĕрĕслесе тухса, трактористсем илме тивĕçлĕ тырпула вĕсене пĕтĕмпех памалла тума хушать.

Фронтовиксен ачисене пама 200 стипенди уйăрнă

ВЛКСМ Обкомĕ ачасене пулăшмалли фондран фронтовиксен вĕренекен ачисем валли 200 стипенди уйăрнă. Кашни стипенди 100-шер тенкĕ пулать. Стипендисене, чи малтанах, фронтовиксен ачисене-отличниксене вĕри апат çинĕшĕн тÿлеме, тумтирсемпе атă-пушмаксем туянма параççĕ.

Стипендисене вĕренекен ачасем е вĕсен ашшĕ-амăшĕсем панă ыйтусем тăрăх, вĕсене шкул директорĕ тата ВЛКСМ шкулти организаци секретарĕ çирĕплетнĕ тăрăх, памалла тăваççĕ. ВЛКСМ райкомĕсен ыйтусене пăхса тухнă хыççăн ун çинчен ВЛКСМ Обкомне пĕлтереççĕ. Стипендисене ВЛКСМ райкомĕсем тÿлеççĕ.

Йĕпреç МТС-не ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне пани

Юлашки

лизмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. ВКП(б) Чăваш Обкомĕ тата Чăваш АССР Совнаркомĕ ячĕпе саламлать те, куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава Киреев юлташ МТС директорне Г. И. Иванов юлташа парать.

Г. И. Иванов юлташ куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава илсе, ответлă сăмах калать.

— Пирĕн коллектив, — тет вăл,— тракторсене юсас ĕçре вăрçă вăхăтĕнчи ответлăха туйса ĕçлерĕ. Эпир государство планне ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр, хамăр тракторсене юсанипе пĕрлех нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă МТС-сем валли 10 трактор юсаса патăмăр. Паянхи чаплă та савăнăçлă кун пирĕн коллектив МТС-ри пур тракторсене те февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтерме сăмах парать.

Иванов юлташ хыççăн ВКП(б) райкомĕн секретарĕ А. П. Гиляровский юлташ саламлă сăмах калать. Вăл МТС коллективне малалла татах та лайăхрах ĕçлеме, çуракине ăнăçлăн хатĕрленме чĕнет.

Ун хыççăн Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Шорников юлташ саламлать. МТС трактористчĕ Маркиянов, МТС-ăн старши агрономĕ Кузьмин юлташсем сăмах тухса калаççĕ. Вĕсем малалла та социализмла ăмăртса ĕçлеме, Хĕрлĕ Ялава МТС-рах хăварассишĕн кĕрешме пулни çинчен шантарса калаççĕ.

Пухура Йĕпреç МТС-ĕпе ăмăртакан Вăрнар МТС-ĕн директорĕ Никонов, МТС-ри малта пыракан бригадăн бригадирĕ Мельцов юлташсем саламлă сăмахсем тухса каларĕç.

Çакăнпа чаплă пуху хупăнчĕ. Пуху хыççăн концерт пулчĕ.

Ют çĕршывсенче

„Ленинград Россия халăхне никам çĕнтерейменнине палăртать“

АМЕРИКА ПИЧЕЧĔ ГИТЛЕРЛА ТУСНЕ ПОРАЖЕНИ ÇАРСЕМ ЛЕНИНГРАД ПАТĔНЧЕ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри хаçатсем Ленинграда тăшман блокадинчен пĕтĕмпех ирĕке кăларни çинчен пĕлтернисене курăнмалли вырăнта пичетлеççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат, Ленинграда хупăрласси пĕтсе ларнине хĕрÿллĕн саламласа, умстатьяра хулари халăха ырлать. Мускав темиçе хут та Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсем ячĕпе салютсем пачĕ,—тесе çырать хаçат,—анчах Сталинград патĕнчи çапăçу хыççăн совет командованийĕ вырăс халăхне çав тери хумхантаракан çĕнтерÿ çинчен урăх пĕрре те пĕлтермен. Нимĕçсем икĕ çул çурă хушши Ленинграда тимĕр кăшăлта тытса усрарĕç. «Урăх нимĕнле пысăк хула та çавăн пек хупăрласа тăнине курман. Ленинград çыннисем пек нумай вăхăт хушши тÿсĕмлĕх кăтартнă пример историре урăх курма пулать-ши?—тесе çырать хаçат.—Вĕсен хастарлăхĕ паттăрла миф пулса историе кĕрсе юлĕ... Ленинград Россия халăхне никам çĕнтерейменнине палăртать».

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн обсзревателĕ Элиот: Ленинград патĕнче нимĕçсене аркатса тăкни нимĕç çарĕсен Ленинград фронтĕнчи чылай пысăк пайне йывăррăн пысса çапни пулчĕ.—тесе çырать.

«Пост диспетч» хаçат (Сен-Луи): Ленинграда паттăррăн хÿтĕлени историе кĕрсе юлать,—тесе çырать.—Тăшман çав тери тискеррĕн тапăннине тÿсме пултарнă халăхăн никам çĕнтереймин хăвачĕ пĕтĕм этемлĕхе хавхалантарса тăрĕ.

«Балтимор сен» хаçат: Хĕрлĕ Çар çурçĕр енче тунă наступлени «Российăн пĕрмай ÿссе пыракан хăватне тĕлĕнмелле палăртни пулать», тесе çырать.

Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместителĕ Сергеев юлташ Канадăра

ОТТАВА, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăн премьер-министрĕ Кинг январĕн 28-мĕшĕнче Канадăна пынă СССР-ĕн Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместительне Сергеев юлташа йышăннă.

Январĕн 29-мĕшĕнче Оттавăра Совет Союзĕн дипломати миссийĕнче Сергеев юлташа чысласа пысăк йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура премьер-министр Кинг, кабинет членĕсем, дипломати корпусĕн членĕсем, çар снабжени министерствин тата ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕсем пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Берлинпа Вильгельмсхафен хулисене тапăнни. — Франкфурт хулинчи ишĕлÿсем

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух, çĕрле, «Москито» йышши самолетсем Берлина тата Хĕвеланăç Германири чылай объектсене тапăннă.

Январь уйăхĕнче Берлин çине пĕтĕмпе 9.300 тонна бомба пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла акăлчансен çыранри авиацийĕн «Бофайтер» йышши самолечĕсем Норвеги çыранĕсем çывăхĕнче кĕтмен çĕртен тăшман суднисене тапăннă. Йывăр тупăсемпе хĕçпăшалланнă пĕр минăй тральщике шыва путарнă, тепĕр суту-илÿ суднине вут тивертсе янă. Тупăпа персе, хуралта çÿрекен карапа сиенленĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăра кĕрешекен авиацийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: февралĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла америкăнецсен йывăр бомбардировщикĕсем, инçене вĕçекен истребительсем хÿтĕлесе пынипе Вильгельмсхафенри (Германия) объектсене атакăланă. Çак операцире пĕтĕмпе 1.100 бомбардировщикпе истребитель ытла пулнă.

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: февралĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух, çĕрле, Англин «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири чылай объектсене атакăланă тата тăшман шывĕсене минăсем хурса тухнă.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсен Майна шывĕ çинчи Франкфурт хули, союзниксен авиацийĕ темиçе хутчен те вăйлăн тапăнса бомбăсем пăрахнине пула, йăлтах тенĕ пекех ишĕлсе пĕтнĕ. Хулан кивĕ пайĕнче пĕр ванман çурт та юлман. Хуларн пурнăç пĕтсе ларнă. Хуларан тухса тарма хăтланакан рабочисене полици кашнинех тытса-гытса чарма тăрăшать.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Италин Адриатика çыранĕсенчи фронт секторĕнче Канада çарĕсем, тăшман вĕсене хирĕç тăрса хытă çапăçнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă. Англин 8-мĕш армийĕн фрончĕн ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă. Англи тата Америка чаçĕсем тăшмана хăйсен Анцио патĕнчи позицийĕсенчен атакăланă, вара вĕсем Кампе-Леоне тата Чистерна пункчĕсем патнех çитсе тухнă. Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче французсен, америкăнецсен тата акăлчансен чаçĕсем нумай вырăнсенче малалла куçнă. Тăшман вĕсене хирĕç тăрса хытă çапăçнă, час-часах контратакăсем тунă.

Январĕн 31-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Клагенфуртри (Австрия), Авианопа Удинери (Çурçĕр Италия) аэродромĕсене тапăннă. Союзниксен самолечĕсем Сан-Бенедеттори (Вăтам Италири) чугун çула атакăланă. Январĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен истребителĕсем тăшманăн Кăнтăр Францири аэродромĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 5-мĕш армири французсен тата америкăнецсен чаçĕсем Кассино хулинчен хĕвеланăçнерехре тусем çинче малалла куçнă, темиçе километр сарлакăш вырăнта тăшман оборони йĕрне çавăрланса кĕрсе кайнă. Анцио порчĕ секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хăшпĕр зонăсенче Англипе Америка çарĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ.

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ А. Е. Корнейчук юлташа хăй ыйтнă тăрăх СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редакторшăн П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00028 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.